



# Манăçа тухмасть салтак кун-çулĕ

Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

**«Пограничник пуласси мана пĕрре те шиклентермен, – пуçларĕ калаçăва Виталий Григорьев. – Шкулта вĕреннĕ чухне пограничниксем çинчен чылай кĕнеке вуланă. Паллах, вĕсен йышне лекме те ĕмĕтленнĕ. Чăн та, шăпа ман ĕмĕте пурнăçларĕ».**

### СИВВЕ ТЕ, ШĂРĂХА ТА ЧĂТНĂ

Шупашкар районĕнчи Паçпак ялĕнче çуралса ӳснĕ йĕкĕте 10 класс пĕтерсен районти çар комиссариачĕ Хусанти танк училищине вĕренме янă. Конкурс пысăк пулнăран Виталий Григорьев телейлисен йышне лекеймен. 18 çул тултарнă хыççăн вара ăна çар ретне илнĕ. «Пирĕн вăхăтри çамрăксем пурте салтака каясшăнччĕ, аслăрах пиччесем те çав шухăш-ĕмĕтпе пурăннă, – малалла тăсăлчĕ калаçу. – Çара кайман арçын – арçын мар», – тетчĕç ун чухне. Çавăнпа чирлисем те салтак атти тăхăнма ăнтăлатчĕç. Çар комиссариачĕ отсрочка парсан та юласшăн марччĕ. Манăн юлташ Валентин пурччĕ. Чире пула ăна çара илмерĕç. Çавăншăн питĕ кулянатчĕ. Çапах та вăл хăйне чăн-чăн салтак пулма хатĕрлесе çитерннĕччĕ. Шел те, шăпа ăна пурнăçран маларах уйăрчĕ».

96 çамрăка Канашран Чита облаçне пуйăспа илсе кайнă. 9 кун çул çинче пулнă вĕсем. Каярахпа «учебкăсене» ăсатнă. «Эпир Приморье тăрăхĕнчи Михайловски районĕнчи Ляличи салине лекрĕмĕр. Каярахпа служба Амур тăрăхĕнчи погранотрядра иртрĕ. Салтак пурнăçĕ чун-чĕрене ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçнă. Канашран пĕрле кайнисемпе малтанах тĕл пулаттăмăр. Каярахпа, çемьеленнĕ хыççăн, ку ырă йăла пăрахăçланчĕ».

Салтак пурнăçĕ Амур облаçĕнчи Сковородино хулинче иртнине палăртрĕ Виталий Петрович. Вăл отделени командирĕ шутланнă. Сăмах май, йышра тăватă чăваш каччи пулнă. Кашниех – отделени командирĕ. «Хĕлле питĕ сивĕ пулатчĕ, тепĕр чухне 62-64 градуса çитетчĕ. Çапах та ăна чăтăмлă ирттерсе янă. Паллах, урана тăм илнĕ тĕслĕхсем пулкалатчĕç. Амур хĕрринче ун пек сивĕсем пулман. Сковородино («сковорода» сăмахран) айлăм вырăнта ларнăран шартлама сивĕсем тăратчĕç. Çуллахи вăхăтра кăнтăрла шăрăхчĕ, 45 градуса çитни те пулнă, каçхине вара сивĕ. Унта типĕ климат, çавăнпа та шăрăха та, сивве те чăтса ирттерме çăмăлтарах. Сковородинăра вертолет лапамĕ пурччĕ. Ăна сыхлама çӳреттĕмĕр е заставăсене илсе каятчĕç. Пирĕн застава 56 çухрăм тăршшĕ чикке пăхса тăратчĕ: пĕр енĕ – 38, тепри 18 çухрăмччĕ. Çĕр каçмаллах каяттăмăр. Кайран фланг вĕçне çити кайса килеттĕмĕр те каçалапа киле кайма тухаттăмăр. Сивĕ çанталăкра та йĕлтĕрпе, çуран тухнă».

### ПĔР ÇЕМЬЕРИ ПЕК

Салтак çулĕсем тахçанах хыçа юлнă пулсан та присяга тытнине манмасть Виталий Петрович. «Питĕ хумханулла самант вăл – присяга тытни. Çыннăн малтан мораль тĕлĕшĕнчен хатĕрленсе çитмелле, çак пулăма чун-чĕре витĕр кăлармалла. Присяга тытнă чухне хăвна аслă çулти çын пек туятăн. Паллах, пĕтĕм яваплăха хăв çине илетĕн-çке. Ахальтен мар салтакăн панă сăмаха тытма пĕлмелле. Çакă – чи кирли. Присягăна та ахаль тытмастăн. Ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама, вăхăтра тума шантаратăн. Салтакăн тĕп йĕрки çакăнтан пуçланать те.

Чикĕ сыхласси те ача вăййи мар. Чикĕ хĕррине пĕрремĕш хут кайни те куç умĕнчех. Наряда тухса кайиччен йĕри-тавра пăхса пымалли пирки асăрхаттаратчĕç кашнинче. Китай чиккине сыхлама каяттăмăр. Унта иккĕн яратчĕç: пĕри хурал ушкăнĕн аслă çынни, тепри – кĕçĕнни. Эпĕ, кĕçĕнни пулнăран, машина çинче çӳлте ларса пыратăп. Аслин вара водительпе юнашар, кабинăра. Урамра 48 градус сивĕ, 12 çухрăм каймалла. Хам вара – йĕп-йĕпе. Яваплăха туйнăран шултра тар тапса тухнă. Юнашарах – йытă. Вĕсене яланах пирĕнпе пĕрле яратчĕç. Каçхине йытăсăр питĕ йывăр, йĕри-тавра тайга. Çӳлевĕçсем çӳреççĕ. Вĕсемпе асăрханулла пулмаллине калатчĕç ялан. Салтакăн вичкĕн куçлă пулмаллине, асăрхама пĕлмеллине шута илмелле. Сыхă пулмалла.



В. Григорьев



... хĕсметрен таврăннă хыççăн

Салтак пурнăçĕнчи виççĕмĕш йĕрке вăл – туслăх. Заставăра пĕр çемьери пек пурăнаттăмăр. Унта пĕр-пĕрне яланах пулăшаттăмăр. Пĕрле ĕçлеттĕмĕр, савăнаттăмăр. Ун чухне котельнăйсене те вутăпа хутнă. Ăна хамăрах хатĕрленĕ. Апата та салтаксемех пĕçернĕ. Салтак пурнăçĕ туслăха хаклама вĕрентет.

Çарта çавăн пекех тăванлăх вăйлă аталанать. Те аякра пурăннăран атте-аннене, тăвансене, юлташсене курас килет. Почтальона мĕн тери кĕтеттĕмĕр тата? Тăван килтен, юлташсенчен çыру илсен савăнаттăмăр. Тепĕр чухне тĕлĕкре те çуралнă тăрăха кураттăм. Чун-чĕрере тăванлăх çирĕп аталанать.

Салтак чун-чĕринче патриотизм та вырăн тупăр. Унсăрăн епле? Пире ачаран Тăван çĕршыва, çуралнă тăрăха юратма вĕрентнĕ. Ахальтен мар эпир çара каяссишĕн çунса тăнă. Ĕнерхи салтакăн çамрăк ăрура патриотизм туйăмне вăратмалла, тăван çĕре юратма вĕрентмелле. Халĕ çарта çулталăк çеç пулаççĕ. Çавна май тăван кĕтесшĕн тунсăхлама та ĕлкĕреймеççĕ пулĕ. Унсăр пуçне салтак ĕçне те вĕренсе çитеймеççĕ. Сăмахран, хĕç-пăшалах илер. Унпа паллашни çеç сахал, унпа усă курма пĕлмелле. Алла тытса курмасăр вара япалана пĕлеймĕстĕн».

Виталий Григорьев халĕ те стройра темелле. Вăл 8 çул Шупашкар тăрăхĕнчи «Пограничное братство» общество пĕрлешĕвне ертсе пырать. Малтан унта 127 çын пулнă тăк, халĕ 46-ăн. Пограничниксем час-часах пуçтарăнса канашлаççĕ, шкулсенче тĕлпулусем ирттереççĕ. Вĕсене уявсене те чĕнеççĕ. Акă, пĕлтĕр вĕсем Тутаркассинчи шкулта кадет класне уçма хутшăннă, кăçал Урай Макаçра пограничниксен юпине вырнаçтарнă. Спортпа та туслă вĕсем. Çулталăкра 3-4 хутчен волейбол турнирĕ йĕркелеççĕ, пăшалтан перессипе те ăмăртаççĕ. Тупăшусене ветерансем мăнукĕсене те явăçтараççĕ. Эппин, пурнăç «вăчăри» малаллах тăсăлать. Туслăх, тăванлăх туйăмĕ те чунра упранать.

■ Валентина ПЕТРОВА



Чăваш каччисем, пурте – отделени командирĕсем. Сулахайран пĕрремĕшĕ – В. Григорьев



Шупашкар тăрăхĕнчи «Пограничное братство» пĕрлешĕвĕн пĕр йышĕ

● ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Сыхăлăх – чи шанчăклă пулăшуçă

**Ачасен çуллахи канăвне йĕркеленĕ чухне пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсем тĕп вырăнта пулмалла. Çакăнпа çыхăннă пĕлтерĕшлĕ самантсене Шупашкар муниципалитет округĕн пуçлăхĕ – Чрезвычайлă лару-тăрусене сирес тата асăрхаттарас комисси председателĕ Николай Хорасев ертсе пынипе иртнĕ канашлура сӳтсе講 яврĕç.**

Раççей МЧСĕн Шупашкар районĕнчи надзорпа профилактика ĕçĕ-хĕлĕн пайĕн аслă инспекторĕ Леонид Малов кăçал ачасем шкулсен çуменчи кăнтăрлахи 17 лагерьте тата хула тулашĕнче сывлăха çирĕплетмелли 2 лагерьте каннине пĕлтерчĕ. Пĕрремĕш ушкăнсенче вĕсене 21 кун йышăнаççĕ пулсан, хула тулашĕнчи лагерьсенче çу тăршшĕпех. Çак тапхăрта учрежденисенче пушар тухас хăрушлăхран сыхланма йĕркесене çирĕп пăхăнмалла. Саккун тата правилăсем ыйтнине мĕнле пурнăçланине надзор органĕ тимлĕ сăнаса тăрать. Тĕрĕслевсем «Салют» тата «Жемчужина Чувашии» ача-пăча лагерĕсен ертӳçисене административлă майпа явап тытармалли сăлтавсем пулса тăнă: лагерьсенче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессишĕн пĕлтерĕшлĕ çитменлĕхсене вăхăтра сирмен иккен. Леонид Андреевич лагерьсен ертӳçисене ачасене йышăнсанах виçĕ кунран иртмесĕр эвакуаци тренировкисем йĕркелеме, хыпарлав, çыхăну тытăмĕсен юсавлăхне тĕрĕслесе тăма хушрĕ, вĕренӳ тата кану учрежденийĕсен территорийĕсенче кăвайт чĕртме, çӳп-çап çунтарма юраманни çинчен асăрхаттарчĕ.

Николай Хорасев комисси членĕсене халăха пурлăха страхланин пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарас ĕçе вăйлатма хушрĕ. Сăлтавĕ – çунса кĕл пулнă çурт-йĕр хуçисем юлашки вăхăтра администрацие укçа-тенкĕ пулăшăвĕ ыйтма тăтăшах килнинче. Шел, пĕр хутчен уйăракан тӳлевсем пушар сăтăрне ним чухлĕ те витеймеççĕ.

Ларура шыва кĕмелли тапхăрта халăха шыв-шурсенчи инкексенчен сыхлама пурнăçлакан мероприятисем çинчен те сăмах пулчĕ. Администрацин граждан оборонипе чрезвычайлă лару-тăрусен секторĕн заведующийĕ Рамиль Гельметдинов пĕлтернĕ тăрăх, «Лагуна» пляж – Шупашкар муниципалитет округĕн территорийĕнче шыва кĕме ирĕк илнĕ пĕртен-пĕр объект. Рамиль Гаязетдинович кăçалхи çу уйăхĕн вĕçĕнче республикăра умлă-хыçлă пулса иртнĕ инкексем çинчен тепĕр хут аса илтерчĕ: виçĕ хĕрачан тата икĕ тин çеç виççĕ тултарнă арçын ачан пурнăçĕсем шăрăх кунсем пуçланнă-пуçланман шывра татăлнă.

Шупашкар район прокурорĕн пулăшуçи Ирина Ильина саккун шыва кĕме юранă вырăнсен переченьне çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕччен тĕплĕ тĕрĕслесе çирĕплетме хушать. «Шыва кĕрекенсен валли хатĕрленĕ памяткăсене, васкавлă пулăшу памалли йĕркене администраци сайтĕнче кăна мар, объектсен çывăхĕнче те вырнаçтармалла», – терĕ Ирина Николаевна.

■ Ирина КРАСНОВА